# „САТИН КЁПЕ“

«Чăнах-та, мĕн-ха вăл Тăван çĕршывăмăр?

Эпе çапла шутлататăп: Тăван çĕршывăмăр вăл — пире çуратнă атте-анне, мана ача чухне сиктерне сăпка, юратнă аппăсемпе пиччесем; Тăван çĕршывамăр вăл — атте çава туптанă сунтал, хамăр кăмпана çурене кунтăк, савăт-сапа, хĕрлĕ тăмран тунă чĕвелти шахличĕ, пурт умне килсе ларса юра шăрантаракан шăнкăрч; Тăван çĕршывăмăр вăл — атте-анне панă чĕлхемĕр, хамăр юратакан юррамăр.

Атте çапла калатчĕ: «Тăван çĕршыва юратакан çын ĕмĕр-ĕмĕрех пархатар курать», — тетчĕ.

Питех те тĕрĕс каланă атте».

Тарăн шухăша яракан çак сăмахсемпе вĕçленет Василий Давыдов-Анатрин «Сатин кĕпе» повеçĕ. Унпа вулакансем малтан «Тăван Атал» журналта паллашрĕç. Нумай пулмасть Чăваш АССР кĕнеке издательстви ăна уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларчĕ. Асăннă повеçсĕр пуçне кĕнекене авторăн калавĕсене те кĕртнĕ.

Калас пулать, повеçĕн юлашки сăмахĕсем тĕп шухăшне ăнланма, тĕп шăнăрне ăнкарса илме май параççĕ. Малтанхи йĕркерен пуçласа вĕçне çитиччен автор вулакансене хăй çуралса ӳснĕ ялпа, ун таврашĕнчи çутçанталăкпа паллаштарать, ӳссе çитĕнекен ачан шухăш-кăмăлĕ, туйăм-сисĕмĕ çинчен каласа парать. Çавăнпа пĕрлех вăл, сăмах майăн, ашшĕ-амăшĕ, аппăшĕсемпе пиччĕшĕсем, юлташĕсем çинчен ăшă сăмах калать. Автор хăй çырса кăтартнă тĕслĕхсене пĕтĕмпех пурнăçран илнĕ, çавăнпа вĕсене ĕненетĕн, чунпа туятăн. Повеçе вуланă май чĕрере ăшă туйăмсем çуралаççĕ: «Чим-ха, манăн та çамрăк чухне кун пекки пулнă-çке, ача чухне мана та атте-анне çаплах вĕрентнĕ».

Кĕнекене вуласа, ача тавракурăмĕ ӳссе, аталанса пынине туятăн. Пурнăçра çавăн пек пулать те ĕнтĕ. Ӳссе пынăçемĕн çамрăкăн ăнланулăхĕ, пĕлĕвĕ ӳсет. Ял халăхĕ çĕнĕ пурнăç патне туртăннине, кивĕ самана юлашкисенчен хăтăлса пынине автор ĕненмелле кăтартса парать. «Выçлăх çулĕ пĕтĕм халăха хуçса хăварчĕ, — тесе çырать вăл, сăмахран. — Мĕн тăвăн, эпир юрсăр-варсăр тăрса юлтăмăр . Ирĕксĕрех типĕ тытатпăр... Аттепе анне тем те шухăшласа пăхаççĕ, анчах ĕç çаплах ăнса пымасть.

— Инкек-синкек турăран, ун умĕнче хамăр çылăха кĕнĕрен пулса пырать пулĕ, — теççĕ хăйсем.

Вĕсем турра пуççапаççĕ, унран çăмăллăх ыйтаççĕ. Ку та пулăшмасть».

Паллах, пулăшма та пултараймасть. Пĕтĕм çăлăнăç пĕрлешӳллĕ ĕçре, халăх пĕр хуçалăха пĕрлешнинче пулнине ял çыннисем майĕпен ăнланса пыраççĕ. Арапуçĕнче те, ытти çĕрти пекех, колхоз йĕркеленет, ăна «Хĕрлĕ хĕлхем» ят параççĕ. Яла малтанхи трактор килни, çĕр ĕçченĕсем тинех канлĕн сывласа яни çинчен çырнă йĕркесене пăлханса вулатăн.

«Аттепе анне пире чăтма çук вĕрентесшĕн çунатчĕç», — вулатпăр эпир кĕнекере. — Халь сире Ленин, Совет самани çул уçса пачĕ. Пирĕн пек вĕренмесĕр тăрса ан юлăр».

Çавна май автор шкулта вĕренни, ăслăлăха алла илни çинчен ăшă кăмăлпа çырать.

Юлашки страницăсенче В. Давыдов-Анатри хăй Шупашкарти хаçат шкулĕнче вĕренни, паллă писательсемпе, поэтсемпе — Н. Шелепипе, И. Тукташпа, Иван Ивникпе, Уйăп Мишшипе, Ухсай Яккăвĕпе, Александр Кăлканпа, Максим Ястранпа тата ыттисемпе тĕл пулни, литература ĕçне мĕнле тытăнни çинчен каласа парать. Çамрăк чухне нумайăшĕ литературăпа интересленет, çырма кăмăллать. Çамрăк вулакансене автор çырасси йывăр ĕç пулни çинчен ăнлантарать, нумай пĕлме, вĕренме кирлине асăрхаттарать.

Тăван ялта çуралса ӳснĕ паллă çынсене асăнма та манмасть автор. Митта Ваçлейĕ поэтпа ыттисем çинчен ăшшăн асилсе çырать.

Вулакансем, паллах, «Сатин кĕпе» повеçпе кĕнекери ытти калавсене тĕрлĕ хак пама пултараççĕ.

«Сатин кĕпе» повеçе ытти чăваш писателĕсем (сăмахран, Трубина Мархви, Уйăп Мишши) ачасем валли çырнисемпе танлаштарма май çук. Калăпăшĕпе вăл пĕчĕк, ăна кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă. Çавăнпа унта ытларах вĕсене сывăх, вĕсем ăнланмалли тĕслĕхсене илсе кăтартнă.

**В. МАКСИМОВ.**